25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 АВГУСТ 1 ШАМАТКУН 178 (6113) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсен тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри **Хисеп хăми** çине кĕртнĕ:

141. Куславкка районĕнчи **«Динамо» колхоз** (ферма заведующийĕ А. М. Руссин юлташ). Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана колхоз пур йышши вылăх-чĕрлĕх тĕлĕшпе те тултарнă тата государствăна аш-какай тăратмалли çулталăкри плана июлĕн 1-мĕш тĕлне тултарнă.

142. Мария Ивановна **Мосолова** — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри сурăхсем пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен Мосолова юлташ 35 сурăхран 40 путек илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман. Мосолова юлташ сурăхсене сăвас ĕçе организацилесе янă, государствăна брынза пармалли çулталăкри плана тултарнă.

143. Екатерина Григорьевна **Мизякова** — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри телятница. Мизякова юлташ ĕнесенчен 29 пăру илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман. Мизякова юлташа лайăх ĕçшĕн хушса тÿлес шутпа 11 килограмм какай панă.

144. Фекла Федоровна **Охотина** — Куславкка районĕнчи «Красноармеец» колхозри телятница. Охотина юлташ 1942 çулта ĕнесенчен 25 пăру илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ, пĕрне те вилме паман. Охотина юлташа лайăх ĕçшĕн хушса парас шутпа 15 килограмм какай панă.

145. Елена Кирилловна **Кириллова** — Куславкка районĕнчи «Красноармеец» колхозри доярка. **Кириллова** юлташ 10 ĕнерен 10 пăру илнĕ. Вăл вĕсене пурне те лайăх пăхса ситĕнтернĕ, пĕрне те вилме паман.

146. Анна Петровна **Петрова** юлташ — Куславкка районĕнчи «Красноармеец» колхозри доярка. Петрова юлташ ĕнесенчен 10 пăру илнĕ. Вĕсене вăл пурне те лайăх пăхса ситĕнтернĕ, пĕрне те вилме паман.

147. Арсентий Миронович **Каменев** — Куславкка районĕнчи «Красноармеец» колхоз фермин заведующийĕ. Каменев юлташ тăрăшса ĕçленипе вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана майракаллă шултăра вылăх тĕлĕшпе те, сурăхсемпе сыснасем тĕлĕшпе те тултарнă, çавăн пекех тата государствăна сĕт тăратмалли çулталăкри плана та майăн 1-мĕш тĕлнех тултарнă.

Тырпулсене лайăх сыхласа усрар

Заводсемпе фабрикăсенчи рабочисем хĕçпăшал туптаççĕ, колхозниксем, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Вĕсем тырпулсемпе пахча-çимĕçсене пăхса ÿстерессишĕн, вĕсене вăхăтра пухса кĕртессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлассишĕн ырми-канми, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Уйхирте, пахчара, итем çинче пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе тунă тырпулсемпе пахча-çимĕçсене лайăх сыхласа усрас пулать.

Вăрçă вăхăчĕ сыхăлăхлă пулма хушать. Хальхи вăхăтра фронт çывăхĕнче те, тылри районсенче те тăшман агенчĕсем, шпионсем, сăтăрçăсем, диверсантсем, вăрăсем пулма пултараççĕ. Вĕсем уйхирти, çĕмелсенчи, капансенчи, амбарсенчи, складсенчи тырпулсене вут тĕртсе çунтарса яма, пĕтерме, çаратма хăтланĕç. Çавăнпа та колхоз пурлăхне, государство пурлăхне сивĕчче сыхлас пулать.

Тырпулсене сыхласа усрас тĕлĕшпе ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире татăклă кăтартусем пачĕç. Унта çапла каланă: «Тыра çĕмелĕсене йăвă лартни пулмалла мар. Тырпулсене пухса кĕртес тапхăрăн пур вăхăчĕсенче те тырпула шанчăклăн тата талăкĕпех сыхламалла тăвас шутпа, хирте хуралсем тăратмалла тата тĕрĕслесе çÿрекен дежурнăйсене уйăрмалла».

Малта пыракан колхозсенче тырпулсене тата ытти пурлăхсене сыхлас ĕçе лайăх организациленĕ. Вĕсенче ял хуралĕсем яланах пур. Пуштартан сыхланас ĕçĕн хуралĕсем хатĕр тăраççĕ. Общестăллă çуртсем патĕнче сторожсем çÿреççĕ. Тырпул пиçнĕ вăхăтра уйхирте юланутсем хурал тăчĕç. Вĕсем иртсе-çÿрекен шанчăксăр çынсене тытса парма пулăшаççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи пĕр колхозăн хуралĕ ыраш хуппипе пĕр ют çын пынине курнă. Хуралта тăракансенчен пĕр çынни ытти колхозниксене систерме яла чупнă, тепри çав çын хыççăн сыхланă. Ялтан юланутлă хурал тухнă та, çав палламан çынна тытса кĕнĕ. Каярахпа палăртнă тăрăх, çав ют çын шанчăксăр çын пулнă. Кунтан ĕнтĕ пирĕн яланах сыхăлăхлă пулма кирли уççăнах курăнать.

Сталин юлташ пире яланах революциллĕ сисĕмлĕхе тата сыхăлăха ÿстерсе пыма вĕрентет. «Пысăк чугунçул кĕперĕ тума темиçе пин çын кирлĕ. Анчах ăна сирпĕнтерсе яма темиçе çын та çителĕклĕ», тет Сталин юлташ. Çапла вара, темиçе пин çын тар юхтарса ĕçленипе тунă хаклă пурлăх пĕр ирсĕр çынăн аллинчен пĕтме пултарать. Уйрăмах халĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăрçнă вăхăтра, кашни колхозникпе колхозницăн çакна асра тытас пулать: тăшман чее тата ултавлă, вăл тĕмĕнле ирсĕр ĕçсем те тума хăтланĕ, тăшманăн пĕр спичкинчен пĕтĕм колхозăн тырпулли, çĕршер çын ĕçлесе тунă хаклă пурлăх усăсăр пĕтме пултарать. Çакна асра тытса, кашни колхозникпе колхозницăн колхоз пурлăхне сивĕччĕн сыхлама тăрăшмалла.

Кашни ялтах, кашни колхозрах, кашни совхозрах, машинно-тракторнăй станцинчех çарти пек çирĕп хурал пулмалла. Тырпулсене амбарсене, складсене, колхоз килкартисене сивĕччĕн хурал тăмалла. Государствăн тата ялхуçалăх артелĕн пурлăхне сыхласа усрас ĕçри ответлăха хуралçăн пĕтĕмпех туйса илмелле. Хурал тăракансене тĕрĕслекен дежурнăйсем пулмалла.

Уйри çĕмелсене тата капансене йăвă лартма юрамасть. Кашни итем çинчех пушара хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем пулма тивĕçлĕ, вĕсене типтерлĕ тытса усрамалла. Итем çинче тулли шывлă катка пултăр.

Çапнă тырра итем çинче нумайччен тытса усрамалла мар. Комбайнсемпе пухнă тата авăн çапнă хыççăн тырра итемсем çинчен хăвăртрах турттармалла, итем çинче 10 кунран ытла хăварма юрамасть.

Тырпула сыхласа усрас тата шута илсе пырас ĕçсемшĕн бригадăсенче — бригадир, колхозра — колхоз председателĕ, совхозра — директорпа политотдел начальникĕ ответ тытмаллине партипе правительство кăтартса пачĕç. Çакна асра тытса, колхозсен, совхозсемпе МТС-сен руководителĕсен тырпулсене сыхласа усрас ĕçре çирĕп йĕрке тума тăрăшмалла.

Вăрçă пуçлансанах Сталин юлташ: «пирĕн çынсем, совет çыннисем, пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтĕмĕшпех ăнланса илмелле, йăваш чунлă пулма, тимсĕрлĕхлĕ пулма пăрахас пулать», тесе асăрхаттарчĕ, çакна асран яма юрамасть.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская** районĕнче, **Батайскран кăнтăралларахрипе** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче тата **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 29-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 танкне çити, войскăсеме грузсем турттарса пыракан 360 автомашинине, горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне тата горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 15 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче юлашки кунсенче пирĕн войскăсем чылай опорнăй пунктсенчен хăваласа кăларнă гитлеровецсем, çапăçăва çĕнĕ чаçсем кĕрте-кĕрте ярса, хăйсен положенине лайăхлатма хăтланаççĕ. Хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнерехре противник пехотин пĕр батальонĕ, артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, атакăна кĕрсе кайнă. Нимĕçсем пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕме хăтланнă. Вĕсем çине минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçласан, нимĕçсем нимĕн йĕркисĕр каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 200 вилли выртса юлнă. Ĕнер пирĕн чаçсем йышăнса илнĕ пункт патĕнче паян кунĕпех хаяр çапăçу пынă. Пирĕн боецсем нимĕçсен тăватă атакине сирсе янă, противникăн 5 танкне тата 900 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн чаçсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире янă, уйрăм участоксенче гитлеровецсене каялла хĕснĕ. Противникăн темиçе танковăй группи тата 2 пехотнăй полкĕ Сажин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн позицийĕсене атакăланă. Пирĕн боецсем атакăна сирсе янă, противникăн 9 танкне тата темиçе çĕр салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн истребительнăй авиаци пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 14 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем противникăн Дон шывĕ урлă каçнă группировкине пĕтерес тĕлĕшпе çапăçнă. Пирĕн танкистсем, пехота активлăн пулăшнипе, нимĕçсен пысăк группировки тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Противникăн 11 танкне, 18 орудине тата 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Кăнтăралла татса кĕрсе каяс шутпа нимĕçсем çĕнĕ танковăй тата пехотнăй чаçсене çапăçăва кĕрте-кĕрте яраççĕ.

* * *

Батайскран кăнтăралларахри тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче противникăн наступлени туса пыракан мотомеханизированнăй чаçĕсене хирĕç юнлă çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн войскăсем хирĕç тăрасси ÿссе вăйланнă пулин те, уйрăм участоксенче нимĕçсем малалла кайма пултарнă. Пĕр участокра противотанковăй пăшалсенчен перекен батальонăн боецĕсем, противникăн атакисене сире-сире ярса, нимĕçсен 18 танкне пĕтерсе тăкнă. Кунта пĕр калмык-бронебойщик Эрдни Деликов ĕмĕр манми чапа тухнă. Гитлеровецсем авиаци хÿтĕлесе тăнипе пирĕн боецсене хĕсме пуçласан, Деликов юлташ противотанковăй пăшалтан пеме тытăннă та нимĕçсен 3 броневикне пĕрин хыççăн тепĕрне пĕтерсе тăкнă. Авиабомба ванчăкĕ Деликов юлташа вилмеллех амантнă. Совет халăхĕн паттăр ывăлĕ, Деликов боец хăйĕн юлташĕсене çапла кăшкăрса каланă: «Илĕр ман пăшала. Çапăр фашистла ирсĕрсене! Пĕлчĕр вĕсем: пирĕннисем каялла чакмаççĕ!» тенĕ.

* * *

Брянск фронтĕнче вырăнти çапăçусем пынă. Пирĕн пĕр часть икĕ кун хушшинче нимĕçсен 5 минометнăй батарейине прислугипе пĕрлех, 2 орудине, 2 йывăр пулеметне расчечĕсемпе пĕрлех, пулеметсен 13 точкине пĕтерсе тăкнă тата 8 блиндажне çĕмĕрнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлернĕ тата амантнă. Тыткăна илнисем пур. Гвардеец Кононов юлташ тăшманăн блиндажне гранатăсем вăркăнтарнă тата нимĕçсен тарса çăланма хăтланнă 4 офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Т. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 3 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 110 вагон ванса кайнă.

* * *

Венгерсен 7-мĕш бригадинчи 35-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Любомир П. çапла каласа панă: «Курскран пуçласа Дон шывĕ патне çитиччен эпир пулнă пур ялсенче те — Мантуровăра, Поповкăра тата ыттисенче те — нимĕç салтакĕсем хресченсене çаратрĕç, вĕсен продукчĕсене, вылăх-чĕрлĕхне, тумтирĕсене, пур хаклă япалисене, хуçалăхра кирлĕ хатĕр-хĕтĕрсене пурне те тытса илчĕç. Çаратнă пурлăха лавсем çине тиерĕç. Офицерсем çавăн пек çаратма, ирсĕрленме хĕтĕртсе тăчĕç тата хăйсем те çаратрĕç. Собродживо ялĕнче вуншар хресчене персе пăрахрĕç, вĕсене хăйсен япалисене нимĕç салтакĕсене ирĕккĕн паманшăн çеç вĕлерчĕç».

* * *

Югослави патриочĕсем нимĕçсемпе итальянец захватчикĕсене хирĕç çапăçас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Çак кунсенче партизансем пĕр хулана йышăнса илнĕ, вĕсем оккупантсене халĕ те çаплах малалла хăвалаççĕ. Козир хули патĕнчи çапăçура итальянецсене 4.000 çынна çити вĕлернĕ тата амантнă. Партизансем 7 танк çунтарса янă, 3 противотанковăй тупă тата ытти хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Каминск, Поляна тата Кокра хулисем патĕнчи çапăçусенче темиçе вуншар гитлеровеца тыткăна илнĕ, 5 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

Июлĕн 31-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская** районĕнче, **Батайскран** кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче тата **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехри вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă. Хуларан хĕвеланăçнерехри вырăнта нимĕçсем пирĕн чаçсене атакăлама хăтланнă, анчах та вĕсене каялла сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсен 200 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Совет авиацийĕ активлăн кĕрешнĕ. Пĕр талăк хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен 12 танкне, 80 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 5 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальон çурра çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 истребительне персе ÿкернĕ, 3 истребительне сиенленĕ.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра нимĕçсен атакисене сире-сире ярса, противникăн войскисене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Пĕр участокра кăна çак юлашки кунсенче противникăн 120 танкне тата 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан Р. пункчĕн районĕнче нимĕç танкĕсен ушкăнĕ пирĕн часть тăракан вырăна татса кĕрсе кайнă. Пирĕн танкистсем вĕсене хăватлăн пырса çапса, противникăн 12 танкне персе çĕмĕрнĕ, противника каялла хăваласа янă. Нимĕçсен командованийĕ совет войскисен оборонин линине татма тăрăшать, çав шутпа вăл çапăçăва çĕнĕ вăйсем кĕрте-кĕрте ярать. Пĕр участокра гитлеровецсем çапăçăва финсен стрелковăй бригадине кĕртсе янă, финсене нимĕç танкĕсем пулăшса пынă. Пирĕн боецсем çав атакăна сирсе янă, темиçе çĕр белофина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Батайскран кăнтăралларахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнсенче пирĕн чаçсем противникăн танковăй йышлă вăйĕсен хаяр атакисене сире-сире яраççĕ. Çав вăйсем питĕ нумай самолет пулăшса пынипе наступлени тăваççĕ. Пысăк çухатусем тÿссе, нимĕçсем пăртак малалла куçнă. Пирĕн пĕр яла боецсен роти тата противотанковăй орудисен подразделенийĕ хÿтĕлесе тăнă. Нимĕçсем вĕсене 8 хут атакăланă, анчах та пирĕн хастарлă боецсене çĕнтереймен. Орудисенчен персе тата гранатăсем, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăта-ывăта, пирĕн боецсем нимĕçсен 16 танкне пĕтерсе тăкнă. Противникăн 400 çын ытла вилсе е аманса юлнă. Пирĕн боецсем тепĕр кунне тин, Командованин приказне илсессĕн, çĕнĕ рубеж патне чакнă.

* * *

Брянск фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Çĕнĕ вăйсем илнĕ хыççăн противник пĕр участокра пирĕн оборонăн малти хĕррине татса кĕме хăтланнă. Гитлеровецсене минометсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, гитлеровецсем вара, пысăк çухатусем тÿссе, каялла чакма пуçланă. Пирĕн боецсем, ĕç çапла пулса тănипе усă курса, халăх пурăнакан пункта, противник сирĕплетнĕскере, çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Тепĕр участокра Попов юлташ командир пулса ертсе пыракан танкистсем тăшманăн вăйлăлатнă моторизованнăй батальонне висĕ енчен пырса атакăланă та нимĕçсен 6 танкне, 16 автомашинине, 12 противотанковăй орудине тата 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçура нимĕçсен 13 салтакне тата 7 офицерне вĕлернĕ. Çав отрядри партизансем юханшыв урлă каçмалли 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Фронт линийĕ урлă пирĕн чаçсем тăракан вырăна каçса килнĕ колхозник А. П. Максимов, Ленинград облаçĕнчи Мякшено ялĕнче пурăннăскер, çапла каласа панă: «Нимĕçсем ялта хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене нумай çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ. «Полоное» совхоза тата таврари ялсенчи 500 хресчене нимĕç влаçĕсем Хильмон барона панă. Хресченсем çав барон патĕнче тул çутăличчен пуçласа сĕм тĕттĕм пуличчененех пĕр тÿлевсĕрех ĕçлеççĕ. Помещик-барон хресченсене мăшкăллать, вĕсене вăл шăтнă сĕлĕ çитерсе пурăнать».

* * *

Орлеанра (Францире) гитлеровецсем, 200 француза яхăн тытса хупса, вĕсене каторгăлла ĕçе яма приговор йышăннă. Çавна май Германие хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ. Франци патриочĕсем пин çын ытла хăйсен юлташĕсене ăсатмашкăн вокзала пуçтараннă. Çав ушкăн конвоя каялла чакарса арпаштарса янă. Тытса хупнисенчен нумайĕшĕ вара тарнă.

Тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртсе, фашизма хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшар!

Кашни комбайнпа 200—250 гектар вырассишĕн

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, июлĕн 31-мĕш. (**Телефонпа**). МТС комбайнĕсем участоксенче ĕçе тытăнма хатĕр тăраççĕ. Вырмалли участоксене пăхса тухса çирĕплетнĕ. Комбайнерсемпе трактористсем кăçал пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хатĕрленеççĕ. «Коммунар» комбайнпа план тăрăх 80 гектар вырса пухмалла пулсан, кăçал нумай комбайнерсем 200—250-шар гектар вырса пухассишĕн кĕрешеççĕ.

Çĕртме тунă чухне паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлесе, МТС дирекцийĕпе политотделăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă бригада (бригадирĕ Афондеркин юлташ) уборка вăхăтĕнче тата пысăкрах пахалăхпа ĕçлеме хатĕрленет. Бригадăри комбайнсем уборкăра краççинпа ĕçлеççĕ, çапла пулсан та Ефремовпа Абакумов комбайнерсем уборка сезонĕнче 200-шер гектар вырса пухма пулчĕç.

Г. ИВАНОВ.
МТС директорĕ.

Комбайнсем уборкăна тухас умĕн

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Ĕнер МТС-ра комбайнерсемпе трактористсен тата вĕсен помощникĕсен пухăвне туса ирттертĕмĕр. Комбайнерсем тата трактористсем хăйсем уборкăна хатĕрленсе çитни çинчен, кăçалхи тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра нихăçанхинчен те тухăçлăрах ĕçлесси çинчен каласа пачĕç, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

Машинно-тракторнăй станцин пур комбайнĕсем те участоксенче тыра вырма тытăнма хатĕр тăраççĕ. Кăçал районри колхозсен уйхирĕсенче 15 комбайн ĕçлет. Комбайнсем çумне улăма купан-купан пăрахса хăвармалли, тыра пĕрчисене тăкăнса юласран пуçтарса пымалли приспособленисем туса лартнă.

Горючие перерасход тыткалас тĕлĕшпе те МТС мĕн тума пултарнине пурне те тунă. Моторсем çумне, вĕсене сивĕнтерсе пыма, çапла вара горючи расходланассине чакарса пыма, шыв бакĕсем туса лартнă, 8 комбайнăн моторĕсене бензин вырăнне краççинпа ĕçлемелле туса майлаштарнă. Вĕсем уборкăра краççинпа ĕçлеççĕ.

МТС трактористĕсемпе комбайнерĕсем кăçалхи уборкăна пысăк пахалăхпа тата чи кĕске срокра туса ирттерме хавхаланаççĕ. Тыра вырас ĕçе комбайсем августăн 2—3-мĕшĕнче тытăнмалла. Ĕçе тухма пур бригадăсем те хатĕр. Комбайнер Ипатов юлташ кăçал хăйĕн «Коммунар» комбайнĕпе 450 гектар вырса пухма пулчĕ. Хасьянов тата Сафьянов юлташсем те 450-шар гектар тыра вырса пухма пулчĕç. МТС коллективĕ ĕç тухăçлăхне пысăккăн çĕклесе горючипе сĕрмелли материалсене 10—15 процент перекетлесе хăварассишĕн кĕрешет.

Б. ШИРКАТДИНОВ.
МТС директорĕ.

Кулленхи нормăна 150—160 процент тултарса ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 31-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**). Районри колхозсенче тырăсене вырса пуçтарас ĕç пуçланчĕ. Ыраша суйласа вырма пуринчен малтан Улхашри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тухрĕ. Паянхи куна колхоз уйрăм участоксенче суйласа 8 гектар ытла ыраш вырнă.

Ĕнер Молгачкинăри «Молодая сила», Пояндайкинăри «Новая жизнь» колхозсем ыраш вырма тухрĕç. Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз уйрăм участоксенче пурĕ 20 гектар ыраш вырнă. Колхозниксемпе колхозницăсем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Ыраш вырас нормăна кашни кунах 150—160-шар процент тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

Тыра амбарĕсене тасатса дезинфекциленĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри малта пыракан колхозсем уборкăна тухма хатĕрленсе çитрĕç. Нумай колхозсем халĕ çĕнĕ тырра йышăнма амбарсемпе складсене тата витнĕ итемсемпе ахаль итемсене тасатса дезинфекцилеме тата юсама тытăннă.

«Красная Чувашия» колхозăн 5 витнĕ итем. Вĕсене пурне те тасатнă. Çавăн пекех Кивĕ Тутайкассинчи «Красный Октябрь», Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те çĕнĕ тырра кĕртме амбарсене тасатса хунă. Çак кунсенчех вĕсене дезинфекцилеме тытăнаççĕ.

А. РАЗИН.

Ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстерсе пырар

КАЛИНИНО, июлĕн 31-мĕш. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсем те ыраша суйласа илсе вырма тытăнчĕç. Кăкшăмри «Знамя труда» колхоз паянхи куна 25 гектар ытла вырнă. Буденный ячĕпе тăракан, Хурăн-Кăкшăмри «Красноармеец», тата ытти хăшпĕр колхозсем паян куна вуншар гектар ытла тыра вырнă.

Анчах та тырăсене вырас ĕçĕн хăвăртлăхĕ нумай колхозсенче халĕ те çителĕклĕ мар-ха. Жнейкăсем малтанхи кунсенчех ĕçе кĕрсе пыраççĕ, анчах кĕреплеллĕ çавасемпе çулассине нумай колхозсенче тивĕçлĕ хак памаççĕ-ха, ку — ĕçри тĕп ситменлĕх пулса тăрать. Кăçалччен нумай колхозсем ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе çулман. Кĕреплеллĕ çавасемпе ыраша та тикĕс, пĕр тăкăксăр çулма пулать тата вăл тырпула пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатать. Колхоз руководителĕсен, агитаторсемпе агрономсен колхозниксене çакна ăнлантарса памалла, кĕреплеллĕ çавасене хăлех ĕçе ямалла, вĕсемпе ĕçлесе, тырăсене пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатмалла.

И. СОЛОВЬЕВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Малтанхи кунах паха тĕслĕх кăтартрĕç

СЕНТЕРВĂРРИ, июлĕн 31-мĕш. (**Телефонпа**). Ĕнер Амачкино ялсоветĕнчи «Красный волгарь», «Красная звезда» колхозсем районра чи малтан ыраш вырма тытăнчĕç.

«Красный волгарь» колхоз членĕсем тыра вырнă çĕрте малтанхи кунах паха ĕç тĕслĕхĕ кăтартрĕç. Пĕр гектар ыраша талăкра 12 çынĕн вырса çыхмалла пулсан, колхозăн 4-мĕш бригадинчи колхозницăсем пурĕ 14 çын пĕр ĕçкунĕ хушшинче 2 гектар ыраш вырчĕç. Çапла талăкри ĕç нормине вĕсем 200 процента яхăн тултарнă.

Паян ыраш вырма районри чылай колхозсем тытăннă.

С. ПЕТРОВ.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейи

КОЛХОЗНИКСЕН АКТИВЛĂХĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Колхозниксем укçа-тенкĕпе япаласен çĕнĕ лотерейин билечĕсен укçине çийĕнчех тÿлеççĕ. Яманак ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 19.575 тенкĕлĕх çырăнса, укçине июлĕн 25-мĕш тĕлне тÿлесе татнă. Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз членĕсем 3.320 тенкĕ, «Венера» колхоз членĕсем 2.680, «Прогресс» колхоз членĕсем 7.540 тенкĕ пухса панă.

Лотерея укçине пухас ĕç Упи ялсоветĕнчи «Янмурзино» тата «Коминтерн» колхозсенче те вĕçленсе пырать.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Парăнман Донбасс

Славянск хулинче хĕвеллĕ уяр кун гитлеровецсем хула площадьне хĕрарăмсен пысăк ушкăнне хăваласа пухнă. Вĕсем 75 çын пулнă—çамрăк хĕрарăмсем, карчăксем, çап-çамрăк хĕрачасем. Площадьре виселицăсен вăрăм речĕ курăнса тăнă. Палачсем хĕрарăмсене çавсем патне сĕтĕрме тытăннă. Вĕсене асаплантарса вĕлерес умĕн гитлеровецсем хăйсен жертвисене ирсĕррĕн мăшкăлласа пĕтернĕ. Вилесем каштасем çинче икĕ талăк çакăнса тăнă.

Виççĕмĕш кунĕнче нимĕç офицерĕсем хăйсене валли çĕнĕ «вăййă» шухăшласа кăларнă. Вĕсем вилесене кинжалсемпе чикнĕ, пенĕ вĕсем çине. Çакăнта, площадьрех, гитлеровецсен шăпи те тулнă.

Гестаповецсем ухтарма тытăннă. Вĕсем çĕрĕпех ухтарнă, анчах нимĕн те тупайман. Ирхине центрти пĕр урамра гитлеровецăн татах тепĕр вилли тупнă. Оккупантсем 65 çулти рабочине Карбовские тата 6 хĕрарăма ярса тытнă та, вĕсене бульварта персе пăрахнă. Нумаях пулмасть гитлеровецсем мирлĕ граждансенчен 5 çынна — стариксене çакса вĕлернĕ. Вĕсен виллисем çумне йывăç хăма çине «партизансем» тесе çырса çакса янă. Виселица патне хурал тăратнă. Çакса вĕлернисенчен тепĕр ирхине пĕри те юлман. Нимĕçсен хуралçисене вĕлерсе хăварнă. Вĕсенчен пĕрин мундирĕ çинче «нимĕçе—вилĕм» тесе çырнă хут татăкĕ курăнса выртнă.

Оккупантăн ури пуснă çĕрте пур çĕрте те мирлĕ пурăнакан хÿтĕлĕхсĕр çынсен юнĕ юхать. Хими заводĕнче ĕçленĕ рабочи Л. юлташ, Константиновкăран тарса тухнăскер, çапла каласа парать:

— Нимĕç захватчикĕсем пирĕн хуларан пушхир туса хучĕç. Вĕсем совет активисчĕсене темиçе çĕршер çынна пере-пере пăрахрĕç. Хими завочĕ патĕнче гитлеровецсем концентрацилле лагерь турĕç, унта совет граждансем асапланаççĕ. Кунсеренех унта темиçе вуншар çын вилет.

Хулари халăх хăйсене асаплантаракансене вилес пек кураймасть. Пĕрре каçхине, хула коменданчĕ килелле таврăннă чухне, ун патне пачах та кĕтмен çĕртен рабочи утса пынă та нимĕçе пистолетран персе вĕлернĕ. Çав хăюллă çынна фашистсем темĕн пек шырасан та тупайман. Оккупантсем 60 заложнике персе вĕлернĕ. Тепĕр темиçе кунран пĕтĕм хула халăх тăшмана таварнин тепĕр акчĕ çинчен пĕлчĕ. Вырăнти учитель патĕнче хваттерте нимĕç офицерĕ пурăннă. Çĕрле учитель нимĕçе пăвса вĕлернĕ те, хăй тарса пытаннă.

Нимĕçсем Донбасри предприятисене ĕçе яма хăтланнисем пурте путланса лараççĕ. Халăх оккупантсемшĕн ĕçлеме килĕшмест.

Халăхăн хирĕç тăрас вăй-хăватне нимĕçсем нимĕнле тискерлĕхпе те хавшатма пултараймаççĕ. Хула урамĕсенче çакса вĕлернĕ çынсен виллисем çакăнса тăраççĕ, вилнĕ çынсене çĕрме картишĕнче çĕршерĕн пытараççĕ. Анчах та нимĕçсем совет çыннисене хăратаймаççĕ.

Сталино хулинче нимĕçсем электростанцие ĕçе яма хатĕрленĕ, станци сывлăшалла сирпĕнсе кайнă. Ветковăри чугун шăратмалли заводра та çавăн пекех пулса иртнĕ. Унта фашистсем танксем юсас ĕçе йĕркелеме шутланă пулнă. Константиновкăри çар заводне те çапла сирпĕнтерсе янă.

Сталино хулинче халăх лавккасенчен нимĕн те илме пултараймасть. Ун вырăнне кунта нимĕç çарĕн офицерĕсем валли виçĕ чаплă магазин уçма хатĕрленнĕ. Вĕсене уçас кун ыран тенĕ чух çĕрле магазинсем пурте çунса кайнă.

Фашистсем лартнă çынсене халăх пĕр хĕрхенÿсĕр тыткалать. Шахтерсен пĕр поселокĕнче нимĕçсем старостăна лартма кандидат тупма пултараймăн. Вырăнти çынсенчен никам та ылханлă тăшман патĕнче службăра тăма килĕшмен. Оккупантсем кÿршĕри поселокран ĕлĕк кулак пулнă çынна илсе пырсан, фашистсен çав тарçи мирлĕ çынсене тискеррĕн асаплантарма тытăннă. Анчах та çав сутăнчăк нумаях хуçаланайман. Пĕринче çĕрле фашистсен тарçине персе пăрахнă.

Донбасра партизанла кĕрешÿ лăпланмасть. Сталино облаçĕн районĕсенчен пĕринче нимĕçсен комендатури: кам та кам партизансен отрячĕн командирĕпе комиссарне тупса парать, çавă 4 пин марка укçа тата 100 гектар çĕр награда илет, тесе пĕлтернĕ. Çав пĕлтерĕве кашни кĕтесрех çыпăçтарса тухнă пулнă. Анчах та сутăнчăксем тупăнман.

— Кашни шахта, кашни поселок, совет çыннин кашни çурчĕ пирĕншĕн шанчăклă хÿтлĕх пулса тăрать, — тет партизансен отрячĕн командирĕ Д. юлташ.—Нимĕçсем пире хирĕç пысăк вăйсем яраççĕ, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулаймасть, вĕсем партизанла движение пĕтерсе лартма пултараймаççĕ. Эпир совет çĕрĕ çинче çапăçатпăр, пире хамăрпа пĕр тĕллев тытакан çынсем пулăшса тăраççĕ. Пирĕн тĕллев—хамăрăн тăван çĕршыва гитлерла оккупантсенчен хăвăртрах тасатасси. Çавăнпа нимĕçсем партизансене тытма пултараймаççĕ.

Донбасра вĕттĕм каç тăрать. Совет çыннисен асапĕсем пысăк. Шахтерсен крайĕ нимĕç йыттисене парăнмĕ. Донбасс кĕрешет.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 29-мĕш. (ТАСС спецкорĕ).

Железнодорожниксен кунне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 31-мĕш. (Телефонпа). Чугунçул çинче ĕçлекенсем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ. 5-мĕш околодокри рабочисем чугунçула юсанă çĕрте нормăран ирттерсе ĕçлеççĕ. Суранов, Самкова, Бондаренко, Сулимова тата Климкина юлташсем нормăна 160 процент тултараççĕ.

Железнодорожниксен кунне хатĕрленнĕ май, чугунçул çинче ĕçлекенсен социализмлă ăмăрту договорĕ пурнăçа мĕнле кĕнине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслев 14-мĕш участокра ĕçлекенсем (бригадирĕ Дударев юлташ) мала тухнине кăтартрĕ. Вĕсем чугунçул линисене отлично паха тăрас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕ.

Иккĕмĕш вырăна 15-мĕш участокра ĕçлекенсем (бригадирĕ Костенин юлташ) йышăннă.

Июль уйăхĕнче станцири работниксенчен çамрăк стрелочница М. Смирнова юлташ лайăх пример кăтартрĕ. Вăл хăйĕн обязанноçĕсене отлично пурнăçланипе пĕрлех стрелка хуçалăхне тÿлевсĕр юсать. Станци дежурнăйĕн Потапов юлташăн ĕçĕнче те кăлтăксем çук.

Х. ЛИСИН.

Хĕрарăмсем производствăра

ИЕПРЕÇ. [Ч]уинскри йывăç каскалакан заводра фронта кайнă арçынсем вырăнĕнче ... хĕрарăм ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ. Складра ĕçлекен работница М. Власова юлташ нормăна ялан 150 процент тултарать. Унăн упăшки тата хĕрĕ Тоня фронта хăйсен ирĕкĕпе кайнă. Çавăн пекех, фронта кайнă ашшĕ вырăнĕнче ĕçлекен Евдокия Келасева хĕрача та нормăна 120 процент тултарать.

Механически цехра кочегарсен вырăнĕнче пĕтĕмпех хĕрарăмсем, пушар дружининче 6 хĕрача ĕçлеççĕ.

И. МИТЯСЬ.

Кăпчанкă хатĕрлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Лесхоз коллективĕ кăçал чылай тĕслĕхсем енĕпе лайăх результатсем кăтартса ĕçлет. Мунчала хатĕрлемелли плана вăл срокченех 107 процент тултарнă.

Коллектив кăпчанкă хатĕрлес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Задани тăрăх кăçал 8,5 тонна кăпчанкă хатĕрлемелле пулнă пулсан, ку таранччен 8,4 тонна хатĕрленĕ. Ку ĕç уйрăмăнах Турхан тата Улхаш лесничестввисенче аван пырать. Вĕсем хăйсене панă задание ытлашшипех ирттерсе тултарнă. Улхаш лесничествинчи Анна Нестерова юлташ бригади (бригадăра 6 çын) плана 162 процент тултарчĕ.

Уйрăм рабочисенчен Д. Долина (Анат Кăмаша лесничестви), Е. Ермишина юлташсене палăртмалла. Вĕсем нормăсене кашни кунах 120—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатас пулать

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хамăрăн Хĕрлĕ Çар валли пурне те çитешекле парса тăма тăрăшаççĕ. Халĕ ĕççыннисем производствăра тăрăшса ĕçленипе пĕрлех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем параççĕ.

Анчах çак ĕçре çитменлĕхсем те пур. Улатăр, Вăрнар тата Первомайски районĕсенче Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе япаласем пухас ĕç сÿрĕкленчĕ. Кунта май—июль уйăхĕсенче пĕр ăшă япала та пухман. Йĕпреç, Куславкка, Комсомольски тата Шăмăршă районĕсенче те çак ĕçе япăх туса пыраççĕ. Çак фактсем ĕнтĕ асăннă районсенчи ВКП(б) райкомĕсем тата ку енĕпе ĕçлекен комиссисем ăшă тумтирсемпе япаласем пухас ĕçе куллен ертсе пыманни çинчен калаççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç—государствăн пысăк ĕçĕ. Çак ĕçе вăхăтра туса пырсан çеç эпир совет воинĕсене ăшă тумлантарма пултарăпăр.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен ăшă тумтирсем пухас ĕçри çитменлĕхсене пурне те халех пĕтермелле, рабочисем, колхозниксем, служащисем тата интеллигентсем хушшинче Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе япаласем пухас ĕçе вăйлатмалла.

Районсенчи тата хуласенчи ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен çак ĕç мĕнле пыни çинчен рабочисен, колхозниксен, служащисен тата килхуçи хĕрарăмĕсен пухăвĕсенче отчетсем туса парас пулать. Çав пухусенче ăшă тумтирсем пухса парас пирки решенисем йышăнмалла, ăшă тумтирсем пухса парас енĕпе тата халăхран пухăннă тирсемпе çăмран ăшă тумтирсем туса хатĕрлессипе коллективсем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илессине организацилемелле.

Халăхран пухнă тирсемпе çăмран ăшă тумтирсем туса хатĕрлемелле. Районри комиссисен Хĕрлĕ Çар валли кĕрĕк пиншаксем çĕлетме, çăматăсем йăвалаттарма промысла артелĕсемпе вырăнти предприятисене заказ памалла. Чăвашпромсоюзăн, Коопинсоюзăн тата Чăваш АССР Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕн ăшă тумтирсем хатĕрлемелли заказсене васкавлăн пурнăçлас пулать.

Пухнă çăмран чăлхасем, носкисем, алшишсем хăвăртрах çыхса хатĕрлемешкĕн çак ĕçе халăха хутшăнтармалла. Вăл ĕçе тума чăлхасемпе алшишсем çыхма пĕлекен çынсене хушас пулать.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса ларма юрамасть. Çак ĕçе ертсе пырас пулать.

Чăваш театрĕн çĕнĕ хунавĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă революци Чăваш театрĕн кунçулне уçса пачĕ. Ленинпа Сталинăн мĕнпур халăхсене этемлĕх культурин çутă тÿпинелле ертсе пыракан политики пирĕн халăхран театр ăсталăхĕн мастерĕсене ÿстерсе çитĕнтерчĕ. Социализмлă аслă революци пулнăранпа 25 çул тулнă тĕле Чăваш театрĕ хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе, хăюллă ĕмĕчĕпе хаваслантаракан ăстасен коллективĕ пулса тăчĕ.

Театр çитĕнĕвĕсене витĕмлĕн кăтартса тăракан паллăсенчен пĕри—театр, çамрăк режиссер Л. Родионов пуçарнипе, чăваш сцени çинче çулпуçсен сăн-сăпатне кăтартас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнни.

Иртнĕ хĕл (1941—42 ç.) сезонне театр Мдивани çырнă «Фронта панă приказ» («Приказ по фронту») ятлă пьесăна кăтартса вĕçлерĕ. Пьесăн тĕп геройĕ—Серго Орджоникидзе. Чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕ Молодов Орджоникидзе сăн-сăпатне, унăн чун-хавалне ăнăçлăн кăтартса пани— куракансене хаваслантаракан çитĕнÿ. Эпир сцена çинче хурçă пек çирĕп, нимле çил-тăвăл авайми, вут-хĕм чĕреллĕ паттăра, кулăш тума юратакан, вĕçĕмсĕр ырă кăмăллă, революци тăшманĕсене хирĕç юлашки юн тумламĕччен кĕрешме хатĕр тăракан çынна куратпăр.

Фашистла Германин вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан вăрçă кунĕсенче театр, пуринчен ытларах, колхозсенче, районри клубсенче ĕçлет. Ку ĕç питĕ кирлĕ, пархатарлă ĕç. Пирĕн артистсем, мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле ĕçлесе, тискер тăшмана пуçĕпех çĕмĕрсе пăрахас кунсене çывхартаççĕ.

Чăваш халăхĕн пурнăçĕнче, ĕçĕнче, кĕрешĕвĕнче театр тата паллăрах вырăнта тăтăр тесе, артистсен йышне аслă шкулсенче вĕренсе тухнă ăстасем хутшăнтарас тесе, пирĕн Правительство 1940 çулта кĕркунне театр ĕçне чунтан юратакан чăваш çамрăкĕсене Мускаври Театр Ăсталăхĕн Институтне (ГИТИС-а) вĕренме ячĕ. Çак телее тивĕçлĕ пулнă çамрăксем мĕнпур вăя хурса вĕренеççĕ.

Институтра вĕренекенсем июлĕн 22-мĕшĕнче хăйсен иккĕмĕш вĕренÿ çулне вĕçлерĕç. Пулса иртнĕ экзаменсемпе зачетсем студентсен ăсталăхĕпе пĕлĕвĕсем тĕрĕс çулпа аталанса пынине кăтартрĕç.

Студентсем илнĕ отметкăсем хушшинче «отлично» тата «хорошо» паллăсем ытларах. Çывăх вăхăтрах студентсенчен Сталин ячĕпе паракан стипендине тивĕçлисем пуласси паллах.

Кăçал театр институтĕнче вĕренекенсен ушкăнĕ йышлăланмалла. Паян, августăн 1-мĕшĕнче, института вĕренме кĕрес текенсем экзамена тăраççĕ.

Экзаменра актер пулас текенсене вĕсем театршăн мĕнтери паха пулассине тĕрĕслемелле (лирикăллă сăвă, басня, прозăран илнĕ татăксене пăхмасăр вулаттараççĕ).

Экзамен виçĕ кун (августăн 3-мĕшĕччен) тăсăлмаллаччĕ. Анчах Шупашкара вăхăтра çитейменнисене пулăшас тесе, Искусствăсен управленийĕ юлашки экзамена августăн 5-мĕшĕнче ирттерме йышăннă. Çаплах тата вăхăтра заявлени парса ĕлкĕрейменнисем, хăйсен докуменчĕсене хатĕрлесе, тÿрех экзамена килме пултараççĕ.

Института кĕме заявлени панă юлташсем хушшинче вăтам шкула пĕтернĕ чух пур предметсемпе те «отлично» илнисем пур; теприсем—вăтам шкула ăнăçлăн вĕренсе пыракансем. Çакна пула чăваш студенчĕсен вĕренĕвĕ малашне те ăнăçлă пырасса çирĕппĕн шанас килет.

Чăваш театрĕн çĕнĕ хунавĕ саралса пырать. Çамрăксене мĕнпур кăмăлтан пысăк культурăллă, хăватлă чĕреллĕ совет художникĕсем пулма сунатпăр.

Д. ДАНИЛОВ.

Югослави партизанĕсен активлă кĕрешĕвĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). Югослави партизанĕсем Босние оккупантсенчен пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тасатнă. Партизансен отрячĕсенчен пĕри, Испанири граждан вăрçин участникĕ пулнă Надж ертсе пынипе, юлашки икĕ эрне хушшинче 300 итальянеца тыткăна илнĕ. Далмацире кĕрешекен партизансем те çавăн пекех хĕçпăшалсемпе çар материалĕсен пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Тинĕс порчĕсенчен пĕрин çине пырса тапăнса, партизансем портри мĕнпур сооруженисемпе оборудованисене пĕтерсе тăкнă.

Загребра осаднăй положени туса хунăранпа оккупантсем хула районĕнче темиçе пин хресчене, вĕсем партизансене пулăшаççĕ тесе, арестленĕ. 104 заложнике асаплантарса вĕлернĕ.

ЖЕНЕВА, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). «Слободна Югославия» радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Лика шывĕн районĕнче Мргорич ялĕ патĕнче нумаях пулмасть партизансен отрячĕсемпе Итали пилĕк пин ытла салтакпа офицертан тăракан чаçĕ хушшинче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçура çĕр оккупанта яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансен пĕтĕмпе те 7 çын кăна пĕтнĕ.

Рвеник ялĕнче тата Госпи хули патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче противникăн пысăк отрядне çапса аркатнă. Итали салтакĕсемпе офицерĕсене 170 çынна пĕтерсе тăкнă, 130 çынна тыткăна илнĕ. Тата хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ.

Мирчич тата Стропино ялĕсен районĕнче итальянецсен юлашки 15 кун хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, 600 çын ытла вилсе пĕтнĕ, вăл шутра пĕр полковник та пур, 900 çын ытла аманнă тата 74 çынна тыткăна илнĕ. Партизансем питĕ нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Лика юханшывĕн районĕнчи çапăçусем малалла пыраççĕ.

Грецири партизансен кĕрешĕвĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). Греци правительствин представителĕсем каласа панă тăрăх, партизансен кĕрешĕвĕ вăйлансах пынă пирки итальянецсен Грецире ирĕксĕрех войскăсем нумай тытма лекет. Греци партизанĕсемпе пĕрле Англин 4.500 салтакĕ оккупантсене хирĕç кĕрешеççĕ.

Партизансен отрячĕсем Грецин пилĕк районĕнче—Родоппа Фраки тăвĕсем хушшинче, Парнас тăвĕн районĕнче, Фермопил районĕнче, Тайгетус тăвĕсем хушшинче, Спартăра тата Крит утравĕ çинче кĕрешеççĕ.

Нумаях пулмасть партизансем Англин 300 салтакне ирĕке кăларнă. Вĕсене Ливире тыткăна илнĕ те Германи концлагерьне ăсатма тăнă пулнă. Родоп тăвĕсен районĕнче Германин çар поездне сирпĕнтерсе янă. Унта нимĕçсем нумай пĕтнĕ. Тайдетус тăвĕсен районĕнче партизансем çыран хĕрринчи Кальмата хули çине пырса тапăннă, унта партизансем Итали полицийĕн начальникне вĕлернĕ. Пырса кĕме çук тусем хушшинче пытанса пурăнакан партизансен отрячĕсем генерал Мандакас командир пулса ертсе пынипе оккупантсен войскисене тăтăшах пыра-пыра тапăнаççĕ.

Партизансем кĕрешнишĕн тавăрас шутпа нимĕçсем граждăнла халăхран 127 çынна персе пăрахнă тата Скине, Прoссе, Канданос хулисене çĕмĕрсе тăкнă.

РУМЫНИ ХУÇАЛАХĔ ЮХĂННИ

ЖЕНЕВА, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Нейе цюрхер Цейтунг» хаçат çапла çырать: «Румыни пĕтĕмпех арканса каяс патне çитнĕ». Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнни Румыни хуçалăхне юхăнтарса янă.

«Румыни влаçĕсем халăха выçă вилмелле туса хурас мар тесе пулсан, — тесе çырать хаçат, — вĕсен Германие çĕнĕ тырăран пĕр килограмм çăнăх та, пĕр килограмм кукуруза та ямалла мар», тет.

Çураки вăхăтĕнче Румынире хресченсем массăллăн саботаж тунă, вĕсем хăйсене кирлинчен ытларах акса хăвараcшăн мар пулнă. Гитлерла «Донау цейтунг» хаçат каланă тăрăх, Румыни влаçĕсем хресченсене хытă асаплантарассипе хăратса ирĕксĕр ĕçлеттернĕ. Халĕ ялсенчи жандармерие «тырă вырса пĕтермелле туман» хушнă.

Вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенчи ялсенче пурăнакан халăха уйрăмах хытă эксплоатацилеççĕ. Румыни помещикĕсем совет хресченĕсене чурасене тыткаланă пек тыткалаççĕ, вĕсене пĕр татăк çăкăр памасăр, пĕр тумлам шыв ĕçтермесĕр тул çутăличчен пуçласа сĕм тĕттĕм пуличченех ĕçлеттереççĕ.

БОЛГАРИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ШУХАШ-КĂМĂЛСЕМ ÜССЕ ПЫРАÇÇĔ

Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Болгари министрĕсен совечĕ йышăннă тăрăх, армансенче тырă авăртнине тĕрĕслесе тăма çăмăлтарах пултăр тесе, «ширлех мар» армансене 6.500 армана хупнă. Юлнă шултăра армансене тырă авăртма ирĕк панă, вĕсене вара «продэкспорт» дирекцийĕн контролерĕсене лартаççĕ («продэкспорт» вăл продовольствие Германие илсе каяс ĕçе пăхса тăракан организаци). Çав контролерсен хресченсем вĕсен «ытлашши» тыррисене илнĕ хыççăн хăйсене хăварнă тырăран ытларах ан авăртчăр тесе тĕрĕслесе тăмалла.

Балканран килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: Болгарире, уйрăмах та продовольстви питĕ нумай çитменнипе, Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем ÿснĕçемĕн ÿссе пыраççĕ.

Пловдив облаçĕнчи Девин хулинче йывăç каскалакан чи пысăк завода тата йывăç материалĕсен складне çунтарса янă. Июлĕн 29-мĕшĕнче Бургасри йывăç материалĕсен складне çунтарса янă.

Болгари сучĕ нумаях пулмасть «государствăна хирĕç» ĕçлеççĕ тесе 17 çынна асаплантарса вĕлермелле туса приговор йышăннă. 64 çынна çавăн пекех айăппах мĕн виличченех тĕрмере лармалла тунă. (ТАСС).

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕш. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Саарбрюкен çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав хулара хурçă шăратакан заводсемпе машина тăвакан заводсем пур.

Енер кăнтăрла Англи истребителĕсен пысăк мар соединенийĕсем Калепе Остенде хушшинчи районра противникăн чугунçулне, баржисене тата автотранспортне атакăланă.

Июлĕн 28-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Бискай заливĕнче Германин подводнăй лодкисем çине бомбăсем пăрахнă.

Противникăн самолечĕсем паян ирхине вăтаçĕрти графствăсен хĕвеланăç пайĕнчи районсенчен пĕрин çине вĕçсе пырса тапăннă. Пĕр пунктра виçĕ больницăна сиенленĕ.

Агитаторсене пулăшма

Ялти агитаторсен задачисем

2. Уборка вăхăтĕнче хаçат-журналсемпе мĕнле усă курмалла

Колхозниксемпе колхозницăсене, совхозсемпе МТС-сенчи работниксене пурне те тырпулсене хăвăрт тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме мобилизацилес ĕçре ялти агитаторсен политикăллă агитацин пур майĕсемпе те, пур формисемпе те усă курмалла.

Агитатор аллинчи чи вăйлă хĕçпăшал вăл—хаçат.

Хаçатсене уйхир тата трактор бригадисене вăхăтра çитерес тесе агитаторăн тăрăшас пулать, хаçатсене ялсовет канцелярийĕнче е колхоз правленийĕнче усăсăр вырттарма памалла мар.

Хаçатсене кашни кунах вуласа парас пулать. Бригадăра вуласа парас умĕн агитаторăн хăйĕн хаçата вуласа тухмалла, унти паха тата интереслĕ статьясене суйласа палăртмалла. Чи малтан Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, отечественнăй вăрçă фронтĕнчен çырнă корреспонденцисене, вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче гитлеровецсем тискер ĕçсем туни, çаратни çинчен вуласа кăтартмалла.

Колхозсемпе совхозсен нумай бригадисенче агитаторсем отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен, Александр Невский, Дмитрий Донской, Кузьма Минин, Дмитрий Пожарский, Александр Суворов, Михаил Кутузов çинчен çырнă очерксемпе кĕнекесене вуласа параççĕ. Агитаторсен пурин те пирĕн геройсем çинчен калакан кĕнекесене, очерксене, статьясене вуласа кăтартас пулать. Ялти агитаторсем чылайăшĕ Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа кăтартнă чухне халĕ фронтра фашистсене хирĕç çапăçакан колхозниксенчен, МТС-семпе совхозсен рабочийĕсенчен илнĕ çырусене вуласа параççĕ.

Совет Союзĕнче тата пĕтĕм тĕнчере юлашки вăхăтра пулса иртекен паллă ĕçсемпе колхозниксене, совхозсемпе МТС-сен работникĕсене куллен паллаштарса пырас пулать.

Колхозниксем хушшинче хаçатсем вуласа панă чухне тата калаçусем ирттернĕ çĕрте отечественнăй вăрçăн пархатарлă тĕллевĕсем çинчен ăнлантармалла, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене курайми пулма халăха воспитани пама тăрăшмалла. Вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче гитлерла мерзавецсем тăвакан тискер ĕçсем, çĕмĕрсе тата çаратса пĕтернисем çинчен пирĕн мĕнпур халăх пĕлсе тăтăр. Хаçатсемпе журналсем çинче фашистла бандитсем советăн хÿтлĕхсĕр хĕрарăмĕсенчен, стариксенчен тата ачасенчен çавтери ирсĕррĕн мăшкăлланине куракансем каласа панисем тата çав тискерлĕхсем çинчен çырнă актсем час-часах пичетленеççĕ. Çавăн пек корреспонденцисене кашнинех бригадăра вуласа памалла.

Вăхăтлăха нимĕçсен фашистла войскисем йышăнса илнĕ ялсемпе хуласенчен килнĕ çынсем нумай колхозсенче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ мирлĕ халăхран нимĕç салтакĕсем çавтери мăшкăлланине курнă, вĕсем хăйсем гитлеровецсен тискерлĕхĕсене тÿссе курнă, агитаторăн çав çынсенчен хăйсем фашистла тамăкра тÿссе ирттернĕ тискерлĕхсем çинчен колхозниксем хушшинче каласа кăтартма ыйтас пулать. Агитаторăн колхозниксене, МТС-семпе совхозсен рабочийĕсене акă çакăн çинчен ăнлантарса памалла: эпир хамăрăн пурнăçа, пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварасшăн пулсан, пирĕн ырми-канми ĕçлемелле, çирĕп тата хастарлă пулнипе вăрçă туса хунă йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене çĕнтерес пулать.

Паллах ĕнтĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен геройла ĕçĕсем çинчен çырнă корреспонденцисене вуласа тата вĕсенчи шухăшсене ăнлантарса панипе пĕрлех, кашни агитаторăн хăйĕн калаçăвне колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, тракторристсемпе комбайнерсем хăйсен производствăри планне, фронт умĕнче хăйсем çине илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пырассипе çыхăнтармалла. Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте тунă хăйĕн ĕçĕнче вăл гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿри аслă ĕçĕн пĕр пайне туса тăнине кашни куртăр. Калаçăва ирттерме хатĕрленнĕ чухне кашнинчех ялхуçалăх ĕçĕсем ытти районсемпе облаçсенче мĕнле пыни çинчен, уборкăра малта пыракансем çинчен, вĕсен стахановла ĕçĕн опычĕсем çинчен калакан статьясемпе корреспонденцисене суйласа илмелле.

Массăсем хушшинчи политикăллă ĕçре стена хаçачĕсем тата «боевой листоксем» (уйхирте ĕçленĕ чухне кăларакан стена хаçачĕсене çавăн пек калаççĕ) пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Уйхир тата трактор бригадисенче, комбайн агрегачĕсенче пуринче те кашни кунах «боевой листоксем» кăларас пулать. Çав листок çинче бригадăра пулса иртекен паллăрах ĕçсене пурне те çутатмалла. Жнейка, лобогрейка лайăх ĕçлени çинчен, тырă выракансем нормăна ирттерсе тултарни çинчен, çавапа çулакансем задание ирттерсе пурнăçлани çинчен çав кунах «боевой листок» çине çырса кăлармалла.

Агитаторăн колхозниксемпе колхозницăсем, бригадăсем, тракторристсемпе комбайнерсем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртса ĕçлессине организацилемелле. Çав ăмăртăва организацилес ĕçре «боевой листокпа» та усă курма пулать. Сăмахран, пĕлтĕр тырă вырнă чухне агитаторсем колхозра лайăх ĕçлекенсем çинчен çапла çырса кăтартнă:

> **«Паян бригадăра никамран лайăх ĕçлекен** колхозница **Надежда Ивановна СТЕПИНА** пулчĕ. Вăл норма тăрăх кунне 350 кĕлте çыхас вырăнне 420 кĕлте çыхрĕ.
> **Степина юлташа пĕтĕм бригадăран салам!»**

Çавăнпа пĕрлех «боевой листоксем» çинче бригадăри йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсене критиклемелле, кахалсемпе ĕçрен пăрăнса çÿрекенсене тăрă шыв çине кăларас, питлес пулать, кая юлса пыракан çынсене вăйлăрах ĕçлес шухăш-кăмăллă пулма, задание пурнăçласа пыракансем пулса çитме пулăшмалла. Уйрăмах тырпулсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртесси çине çаврăнса пăхас пулать.

Аçта тырра тирпейлĕ пуçтармаççĕ, унта агитатор, сăмахран, çакăн пек çырса «боевой листок» кăларма пултарать

> Кунта **ИВАНОВА** юлташăн звени ĕçлерĕ. Пĕр квадратнăй метрта вĕсем 10 пучах хăварнă. Пĕр гектар çинче 200 килограмм тырă тăкса хăварнă!
> **Кун пек ĕçлеме юрамасть!»**

Агитатор вăл— политикăллă ĕçри работник, массăсен организаторĕ. Вăл хăйĕн ĕçне бригадăри çынсене лайăх пĕлнипе, хăйĕн тавра колхозниксемпе колхозницăсенчен тăракан актива пĕтĕçтернипе малта пыракансем çине таянса ĕçленипе туса пырсан, унăн ĕçĕ ăнăçлă пулса пырать, вăл тырпулсене пухса кĕртес ĕçре чăннипех те çарти пек ĕçлеме колхозниксене организацилеме пултарать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

УПРАВЛЕНИЕ АВТОТРАНСПОРТА ПРИ СНК ЧУВАШСКОЙ АССР

объявляет набор на курсы шоферов в г. г. Канаше и Чебоксарах.

Принимаются лица обоего пола в возрасте не моложе 17 лет и 6 месяцев, имеющие образование не ниже 4—5 классов.

Курсанты обеспечиваются стипендией в размере от 80 до 120 р. в месяц, в зависимости от успеваемости. Срок обучения 1½ месяца.

Курсанты обеспечиваются столовой.

Заявления с документами об образовании, рождении, заверенной автобиографией, 4 фотокарточками и почтовыми марками направлять: желающие обучаться в г. Канаше в Канашскую автошколу, а в г. Чебоксарах — в Управление Автотранспорта, ул. Союзная, № 4.

Начало занятий в Чебоксарах I набора 1 августа и II набора — 1 октября, в Канаше II набора — 1 сентября с/г.

Управление Автотранспорта при СНК Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1328.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.